“АПК аталантарасси” наци проекчĕ

# Кредитпа аталанма çăмăлтарах

*“АПК аталантарасси” наци проекчĕ çăмăл мар лару-тăрăва кĕрсе ӳкнĕ ял хуçалăхне ура çине тăратмалли мĕн пур çула уçрĕ. Ку çеç те мар. Уйрăм хушма хуçалăх тытакансемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсене ал-ура çавăрса яма май пачĕ. Асăннă наци проекчĕн тепĕр енĕпе те пирĕн районта ĕçсем малалла пыраççĕ. Сăмах кунта выльăх-чĕрлĕх отрасльне васкаварлă аталантарасси пирки пырать.*

*Выльăх-чĕрлĕх фермисене реконструкцилесе энергипе вăя перекетлеме май паракан çĕнĕ технологи çине куçмалла – çакăнта кураççĕ районти ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисем выльăх-чĕрлĕх отраслĕн малашлăхне. Çак тĕллевпе Ленин, Чкалов, Чапаев, Е. Андреев ячĕпе хисепленекен, “Волга”, “Чемеево”, “Свобода”, “Ударник”, “Передовик” хуçалăхсем пурĕ 140 миллион тенкĕлĕх нумай вăхăтлăх кредит илме бизнес-плансем хатĕрлерĕç.*

*Çак кунсенче вĕсен ертӳçисем “Россельхозбанк” акционерсен уçă обществин Чăваш регионĕнчи филиалĕн представителĕсемпе тĕл пулчĕç. Тĕпрен илсен, калаçу унта кредит илме мĕнле документсем хатĕрлесси, куçман пурлăхпа çĕре регистрацилесси, патшалăх пулăшăвĕпе мĕнле тĕллевпе усă курасси тавра пулчĕ. Банк представителĕсем пуçтарăннисен ыйтăвĕсем çине тулли хуравсем пачĕç. Эпĕ вара тĕл пулу хыççăн “Россельхозбанкăн” Чăваш регионĕнчи филиалĕн кредит парассипе тата инвестицилессипе ĕçлекен пай пуçлăхĕн çумĕпе А.В. Веденинпа калаçрăм. “АПК аталантарасси” наци проектне пурнăçа кĕртессинчи малашнехи утăмĕсем çинчен ыйтрăм.*

**Унччен вара çакна палăртмалла. “Россельхозбанк” акционерсен уçă обществине РФ Президенчĕн 2000 çулхи мартăн 15-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе йĕркеленĕ. Унăн патшалăх капиталĕ – 100 процент. Раççей Федерацийĕн ячĕпе акционер прависене федераллă пурлăха ертсе пырассипе ĕçлекен “Росимущество” Федераллă агентство пурнăçа кĕртет.**

**Банкăн Сăнакан канашĕн Председателĕ – РФ Ял хуçалăх министрĕ А.В. Гордеев. Сăнакан канаш составне РФ Финанс министерствин Ял хуçалăхĕпе ĕçлекен Федераллă агентствăн, Федераллă пурлăхăн Раççейри агентствин, РФ Экономика аталанăвĕпе сутуилӳ министерствин представителĕсем кĕреççĕ.**

**“Россельхозбанк” акционерсен уçă обществин Правленийĕн Председателĕ – Ю. В. Трушин.**

**“Россельхозбанк” патшалăх программисене пурнăçлассинче РФ Правительствин агенчĕн функцийĕсене пурнăçлать.**

**2006 çултан пуçласа “Россельхозбанк” “АПК аталантарасси” приоритетлă наци проектне хутшăнать, икĕ енĕпе ăнăçлă ĕçлесе пырать:**

**– Выльăх-чĕрлĕх отрасльне хăвăрт аталантарасси;**

**– АПК агропромышленность комплексĕнчи пĕчĕк хуçалăх формисене пулăшасси.**

**Кунта сирĕн ыйту сиксе тухма пултарать: выльăх-чĕрлĕх отраслне васкавлă аталантарасси мĕне пĕлтерет. Хуравĕ çапла: 8 çуллăха выльăх-чĕрлĕх комплексĕсене тума, реконструкцилеме тата çĕнетме нумай вăхăтлăх кредит параççĕ. Çак 8 çуллăха паракан кредита Раççейре ĕрчетекен ăратлă выльăхсене туянма тата вĕсене тытса тăрассине лайăхлатма параççĕ.**

**Хамăрăн калаçăва вара Анатолий Владимирович çапла пуçларĕ:**

– Ял хуçалăх предприятийĕсене выльăх-чĕрлĕх сферине васкавлă аталантарма паракан кредитпа 2007 çулта усă курма тĕллев лартнă. Çак тĕллевпе эпир ЧР Ял хуçалăх министерствипе тата районсен администрацийĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлетпĕр. Хальхи вăхăтра выльăх-чĕрлĕх фермисене çĕнетес, реконструкцилес тĕллевпе ял хуçалăх предприятийĕсенчен заявкăсем йышăнатпăр.

**– Пирĕн районта ку тĕлĕшпе тунă малтанхи утăмсене мĕнле хак панă пулăттăр?**

– Проектсене пăхсан, çакă палăрать: çĕнĕлле ĕçлес туртăм, пысăк вăй-хăват пур вĕсенче. Пурте пурнăçа кĕмеллескерсемех вĕсем. Халĕ вăхăта сая ямасăр банка финанс документчĕсене, çавăн пекех илнĕ парăма тавăрса пама шантаракан документсене тăратмалла. Çапла вара çулталăк вĕçлениччен банкран кредит илме ирĕк илме ĕлкĕрмелле. Вара 2007 çулта проекта пурнăçа кĕртме пуçламалла.

**– Паянхи тĕл пулăва пĕтĕмлетсе мĕн калама пултаратăр?**

– Паян эпир ял хуçалăх предприятийĕсем тăратнă проектсене пăхса тухрăмăр, сӳтсе яврăмăр. Тӳрех каламалла, вĕсене пĕлсе тата “Россельхозбанк” требованийĕсене тивĕçтерӳллĕ хатĕрленĕ. Çакăн пирки çеç ыйтас килет: фермăна тăвассинче е реконструкцилессинче хуçалăх мĕнле хутшăннине те, ăратлă çамрăк выльăх туянассине те, кирлĕ пулсан, ял хуçалăх техникипе оборудование туянассине те пĕр бизнес-планрах туллин палăртмалла.

**– Черетлĕ тепĕр утăм хăшĕ пулать кредит илме хатĕрленекен ял хуçалăх предприятийĕсен?**

– Бизнес-плана тунă хыççăн хуçалăхсем кредит илме кирлĕ документсен перечение илеççĕ. Унпа килĕшӳллĕн вара кирлĕ документсене хатĕрлемелле.

**– Çакăнпа ĕç вĕçленмест вĕт-ха?**

– Тепĕр черетлĕ утăм вара – банк эксперчĕсем хуçалăхсем тăратнă финанс, юридици, парăма тавăрма шантаракан документсене экспертиза витĕр кăларни. Çакна татсах калама пулать. “Россельхозбанкăн” квалификациллĕ ĕçченĕсем кашни бизнес-плана, документсене кĕске вăхăтрах пăхса тухаççĕ. Кăçал 21 проект пăхса тухнă банк.

**– Миçе кунта татса параççĕ проектăн малашлăхне?**

– Кирлĕ документсен пакетне тăратнинчен пуçласа, экспертиза витĕр тухмалли тапхăр 10 кунтан ытла тăсăлмалла мар. Практика çакна кăтартса парать: проектсем ытларах тĕслĕхре кредит илнипе вĕçленеççĕ.

**– Малашнехи тĕллевсем. Мĕнлисем вĕсем?**

– Çулталăк вĕçлениччен Муркашра центрта “Россельхозбанкăн” хушма офисне уçмалла. Çакна валли пӳлĕм пур ĕнтĕ. Çакă вара уйрăм çынсемпе предприятисене “АПК аталантарасси” наци проекчĕпе килĕшӳллĕн патшалăх пулăшăвне ытларах пама май парать.

**Кунта çакна çеç хушса каламалла: халиччен кун пек çăмăллăхлă кредит пĕрре те пулман. Çавăнпа та унпа усă курманни йăнăш пулĕччĕ. Патшалăх пулăшăвĕпе усă курса, выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче çĕнĕ технологи çине куçмалла – урăх çул çук паян. Çавăнпа та ытти ял хуçалăх предприятийĕсен те çулталăк вĕçлениччен çак кредита илме тăрăшмалла, кая юлмасăр район администрацийĕн ял хуçалăх управленине заявкăсем тăратмалла.**

**Асăннă наци проекчĕ чăннипех те йывăрлăхран тухма пулăшнине килти хушма хуçалăхсем те ăнланса илчĕç ĕнтĕ. 741 кредита 108 миллион та 225 пин тенкĕлĕх илчĕç, ку ĕç малалла пырать. Çакăн пек асăрхаттару пур. Çулталăк вĕçленсе пынă май кăçал килти хушма хуçалăха аталантарма халĕ кредит илекенсен унпа тĕллевлĕн усă курнине кăçалхи декабрĕн 1-мĕшĕччен тăратмалла. Çакă çулталăк вĕçленсе пынипе çыхăннă. Кредитпа усă курнин процент ставкине саплаштарма субсидие кăçал валли çак тĕллевпе пăхса хăварнă укçа-тенкĕрен саплаштармалла. Çавăнпа та тивĕçлĕ документсене пуçтарма васкăр.**

**Асăннă наци проекчĕпе килĕшӳллĕн 3 хресчен (фермер) хуçалăхĕ 4 миллион та 200 пин тенкĕлĕх усă курчĕ унпа. Кунта çакна палăртмалла: килти хушма хуçалăхсем хресчен (фермер) хуçалăхĕсене те пĕрлешме пултараççĕ. Кун пек вĕсене патшалăх паракан пулăшу татах та пысăкрах пулать. Хресчен (фермер) хуçалăхĕсен - 3 миллион тенкĕ таран.**

**Тепĕр çул вăл - потребительсен кооперативĕсем тăвасси. “АПК аталантарасси” наци проекчĕпе килĕшӳллĕн вĕсене 10 миллион тенкĕ таран кредит параççĕ. Хальлĕхе 3 кооператив çеç йĕркеленнĕ-ха: 2 Юнкă ял тăрăхĕнче, тепри – Москакасси ял тăрăхĕнче. Кооперативсем тăвассипе пуçаруллă çынсене хапăл тусах кĕтетпĕр.**

**Л. ПАВЛОВА** калаçнă.

# Указа ăнлантарса пани

**(Указ 1-мĕш стр.).**

Чăваш республикин социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн кăтартăвĕсем тăрăх 2006 çулхи вунă уйăхра промышленноç производствин ӳсĕмĕ 16 процентран иртнĕ, пурăнмалли çурт-йĕр строительстви - 25 процент ытла. Агропромышленноç комплексĕн предприятийĕсем кăларнă продукци калăпăшĕ 7 процент пысăкланнă. Çакнашкал пысăк кăтартусем республикăра пурăнакансен социаллă хӳтлĕхне çирĕплетме май параççĕ.

Унччен Чăваш Енри бюджетниксем раштавшăн тӳлекен ĕç укçине Çĕнĕ çул каникулĕ хыççăн илнĕ. Халĕ Чăваш Енри бюджет сферин ĕçченĕсене раштавшăн тӳлемелли ĕç укçине кăрлачăн 1-мĕшĕччен парĕç. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене, Чăваш Ен территорийĕнчи мĕн пур хуçалăх субъектне те çак йĕркене пăхăнма сĕннĕ.

Раççей Федерацийĕн Финанс министерстви педагогика ĕçченĕсене классене ертсе пынăшăн уйăхсерен укçан хавхалантарас енĕпе хушма укçа тӳлессипе çыхăннă мĕн пур саманта туллин шута илмен. Указа пурнăçлани çак ыйтăва татса пама пулăшать.

Чылай мера - халăхăн транспорт ыйтăвĕсене тивĕçтерессин пахалăхне ӳстерес, çул çӳрев хăрушсăрлăхне çирĕплетес тĕллевлĕ. Министрсен Кабинетне пассажирсене илсе çӳрекен çĕнĕ автобуссем туянассипе çыхăннă ыйтусене татса пама сĕннĕ. Çавăн пекех Çул çӳрев хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕ валли оборудованипе транспорт туянма самай пысăк хушма укçа уйăрма палăртнă.

Президент çавăн пекех 2007 çулта студентсемпе вĕренекен çамрăксен çăмăллăхлă билечĕсене упраса хăвармалли майсем тупма хушнă. Федераци шайĕнче çавнашкал çăмăллăхсем памалли саккун çук, гражданснене уйăхсерен укçа тӳлеме пуçласан вара транспорт организацийĕсем тăкак тӳсме пултараççĕ. Çавна май ку ыйтăва республикăра татса панипе пĕрлех Чăваш Енĕн Патшалăх Канашĕпе пĕрле тивĕçлĕ саккун кăлармалли пуçарупа Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думине тухасшăн.

Социаллă пурнăçпа культура сферин тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх объекчĕсене кĕркуннехи-хĕллехи тапхăрта йĕркеллĕ ĕçлеттересси - пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту. Çавна май Министрсен Кабинетне муниципалитет тытăмĕсене пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен строительствишĕн тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлес енĕпе хушма пулăшу памалли майсене пăхса тухма хушнă.

Çак Указпа килĕшӳллĕн йышăнакан хушма мерăсем бюджет тăкакĕсен социаллă пурнăçпа экономикăри тухăçлăхне ӳстерĕç, Чăваш Республикин социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕнче тата пысăкрах çитĕнӳсем тума пулăшĕç.

**Н. СМИРНОВ,**
**Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн пĕрремĕш çумĕ – финанс министрĕ.**

По просьбе читателей

# Пенсионные накопления. Что с ними делать?

В соответствии с вступившим в силу с 1 января 2002 г. новым пенсионным законодательством Российской Федерации трудовая пенсия состоит из трех частей: **базовой**, **страховой** и **накопительной**.

**Базовая** часть трудовой пенсии не зависит от результатов трудовой деятельности, устанавливается Правительством в фиксированном размере и периодически индексируется.

**Страховая** и **накопительная** части трудовой пенсии назначаются и пересчитываются на основе данных индивидуального (персонифицированного) учета и напрямую зависят от размера поступивших страховых взносов, учтенных на индивидуальном лицевом счете, который открыт в Пенсионном фонде Российской Федерации на всех граждан, зарегистрированных в системе государственного пенсионного страхования в качестве застрахованных лиц. Индивидуальный лицевой счет имеет общую и специальную части, в которых отражаются данные о страховых взносах, перечисленных на обязательное пенсионное страхование. Документом, свидетельствующим о регистрации, служит страховое свидетельство, номер которого соответствует номеру индивидуального лицевого счета.

В течение всей трудовой деятельности лицевой счет застрахованного лица пополняется сведениями о его стаже, заработке (доходе) и уплаченных в Пенсионный фонд страховых взносах. Следует отметить, что размер средств, поступивший на финансирование страховой части трудовой пенсии, индексируется в соответствии с законодательством Российской Федерации. Размер средств, поступивших на финансирование накопительной части рудовой пенсии, не индексируется.

В соответствии с Федеральным законом Российской Федерации от 01.04.1996 г. № 27-ФЗ “Об индивидуальном (персонифицированном) учете в системе обязательного пенсионного страхования” за 2005 г. по Моргаушскому району для разноски на индивидуальные лицевые счета приняты индивидуальные сведения о страховом стаже и начисленных страховых взносах на обязательное пенсионное страхование застрахованного лица от 297 страхователей (работодателей) на 16998 застрахованных лиц.

**Пенсионный фонд Российской Федерации ежегодно направляет застрахованным лицам информацию о состоянии их индивидуального лицевого счета**. С мая 2006 года ПФР приступил к рассылке по почте информации о пенсионных накоплениях, сформированных за счет страховых взносов, поступивших в 2005 году. Эти письма большинство из числа работающих застрахованных лиц получили и не знают что с ними делать, так вот в соответствии с Федеральными законами от 24.07.2002 г. № 111-ФЗ “Об инвестировании средств для финансирования накопительной части трудовой пенсии в Российской Федерации” и от 07.05.1998 г. № 75-ФЗ “О негосударственных пенсионных фондах” застрахованные лица могут приумножить свои пенсионные накопления путем их инвестирования. Для этого имеется несколько возможностей:

- выбрать инвестиционный портфель одной из управляющих компаний;
- отказаться от формирования накопительной части трудовой пенсии через ПФР и выбрать один из негосударственных пенсионных фондов (далее – НПФ), осуществляющий деятельность по обязательному пенсионному страхованию, подав в ПФР заявление о переходе в выбранный НПФ. Для передачи накоплений в НПФ застрахованному лицу необходимо заключить с НПФ договор и подать соответствующее заявление в ПФР;
- отказаться от формирования накопительной части трудовой пенсии через ранее выбранный НПФ и выбрать для этой цели другой НПФ, осуществляющий деятельность по обязательному пенсионному страхованию;
- отказаться от формирования накопительной части трудовой пенсии через ранее выбранный НПФ и перейти в ПФР. В этом случае средства пенсионных накоплений передаются Пенсионным фондом Российской Федерации в государственную управляющую компанию.

**Заявления о выборе инвестиционного портфеля (управляющей компании) и о переходе из ПФР в НПФ, из одного НПФ в другой НПФ, из НПФ в ПФР принимаются не позднее 31 декабря 2006 г. в Управлении ПФР лично или через почтовую связь**. При направлении заявления через почтовую связь подлинность подписи заверяется нотариусом. Заявления о выборе инвестиционного портфеля (УК), о переходе из ПФР в НПФ, переходе из одного НПФ в другой, переходе из НПФ в ПФР должны быть заполнены в соответствии с инструкциями по заполнению заявлений. В настоящее время 56 управляющих компаний с учетом государственной управляющей компании и 109 негосударственных пенсионных фондов. Перечень управляющих компаний и негосударственных пенсионных фондов размещены на информационном стенде Управления ПФР, на стендах в консультационных пунктах в Александровском, Кадикасинском, Большесундырском, Ильинском, Юнгинском сельских поселениях, центральной районной библиотеке.

**Если же застрахованное лицо промолчит и не направит заявление о выборе управляющей компании или о переходе из ПФР в НПФ, то его пенсионными накоплениями будет управлять государственная управляющая компания – Банк внешнеэкономической деятельности СССР (Внешэкономбанк).** Внешэкономбанк включен в список управляющих компаний в 2006 году. Средства пенсионных накоплений Внешэкономбанк вкладывает в основном в государственные ценные бумаги. По итогам первого полугодия 2006 года доходность инвестирования пенсионных накоплений у Внешэкономбанка составила 4,69 процента, что ниже уровня инфляции. За то же первое полугодие доходы у ряда управляющих компаний, работающих со средствами пенсионных накоплений, составили от 20 до 30 процентов и более. Доходность Внешэкономбанка примерно в 4-5 раза превышают и доходы негосударственных пенсионных фондов.

Ответственность за сохранность средств пенсионных накоплений несет государство. Оно отвечает за создание условий, исключающих нецелевое использование средств пенсионных накоплений. Кроме того, ответственность за сохранность средств пенсионных накоплений несут сами управляющие компании и негосударственные пенсионные фонды. Государством предусмотрено обязательное страхование их ответственности. При этом если НПФ или управляющая компания решат по каким-то причинам прекратить свою деятельность, пенсионные накопления вкладчиков не сгорят. По закону в этом случае накопительные средства будущих пенсионеров будут возвращены в Пенсионный фонд.

Право выбора управляющих компаний действует с 2003 г., а право на перевод средств пенсионных накоплений с 2004 г. В 2003 году по району было подано 62 заявления, в 2004 году не подано ни одного заявления, в 2005 году – 67 заявлений, на 10 ноября 2006 года - 9. Наибольшее количество заявлений подано о переходе в негосударственные пенсионные фонды “Большой Пенсионный фонд” и “Электроэнергетики”.

**Как же быть тем, кто не получил письма Пенсионного фонда РФ?** Право на выбор управляющей компании или негосударственного пенсионного фонда при этом не теряется. О состоянии индивидуального лицевого счета любое застрахованное лицо может узнать лично обратившись в территориальный орган Пенсионного фонда РФ по месту жительства.

Всю необходимую информацию для реализации прав по формированию накопительной части трудовой пенсии и по всем интересующим вопросам о состоянии индивидуального лицевого счета, застрахованные лица могут получить в Управлении Пенсионного фонда в Моргаушском районе ЧР по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23а. Ждем Вас до 31 декабря 2006 г.

**О. АЛЕКСЕЕВА,**
**начальник отдела персонифицированного учета взаимодействия со страхователями и застрахованными лицами УПФР в Моргаушском р-не.**